Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

52 (8013) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи утӑ (июль) уйӑхӗн 11-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Муркаш кӗрлерӗ, савӑнчӗ



«Паянхи Муркаш ҫамрӑкӗсен ӳсӗмӗнчен районӑн малашнехи тӑнӑҫлӑхӗ килет», – ҫапла палӑртрӗ кооператорсене, ҫамрӑксене, ҫемьесене саламланӑ май Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан С. Ермолаев. Сергей Николаевич район, ял тӑрӑхӗн пурнӑҫӗнче ҫемьесен вырӑнӗ пысӑккине тепӗр хут асa илтерсе Лариса Александровнӑпа Николай Иванович Аксендаровсен ҫемйине **(сӑн ӳкерчӗкре районти ертӳҫӗсемпе пӗрле)** парне парса саламларӗ. Ҫурлатри ялӗнчи ҫамрӑк ҫемье виҫӗ ача пӑхса ӳстерет, ӗҫре маттур, ял-йышра хисепре. Уявра Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи Полина Николаевнӑпа Николай Либкнехтович Волковсен тата Муркашра пурӑнакан Лариса Константиновнӑпа Сергей Валентинович Андреевсен ҫемйисене те (икӗ ҫемйи те Муркаш райпо тытӑмӗнче вӑй хураҫҫӗ) саламларӗҫ.

Ыранхи пурнӑҫа йӗркелекен Муркаш ҫамрӑкӗсем вӗренни ҫутӑ кӑна мар, вӗренни «ылтӑн» пулнине хӑйсем курса ӗненчӗҫ. «Алмаз-холдинг» общество представителӗ вӗсене, Муркашри вӑтам шкултан тата Муркаш лицейӗнчен медальсемпе вӗренсе тухнисене, ылтӑн кулонсем парнелерӗ. Ыттисемшӗн пулчӗ ӑмсанмалли...

**(Тӗплӗнрех 3-мӗш стр. паллашӑр).**

Хушма вӗрентӳ

## Раҫҫей шайӗнче – пирӗн ҫамрӑк экологсем

Юнкӑ ял тӑрӑхӗнче республикӑри шкул лесничествисен тата ҫамрӑк геологсен слечӗсем иртрӗҫ. Сакӑр районти вунӑ команда хӑйсене виҫӗ кун хушши тӗрӗслерӗ.

Юнкӑри вӑтам шкулӑн икӗ команди пирӗн район чысне тивӗҫлипех хӳтӗлерӗ: Аслӑ ушкӑнри вӗренекенсен команди – Мария Сытина, Екатерина Федорова, Елизавета Шишкина, Алексей Ермаков тата Алексей Федоров – уйрӑм конкурсенче малти вырӑнсене йышӑнса пӗтӗмлетӳпе 1-мӗш вырӑн йышӑнма пултарчӗ.

Кӗҫӗн ушкӑнрисем те – 6 класра вӗренекен Виктория Шишкина, Анастасия Моторкина, Анастасия Романова, Андрей Краснов тата Лев Романов – хӑйсене лайӑх енчен кӑтартнӑ.

Юнкӑри вӑтам шкул командине Раҫҫейри ҫамрӑк экологсен слетӗнче Чӑваш Республикин чысне хӳтӗлеме шаннӑ. Слетри ӗҫсен пӗтӗмлетӗвӗпе пирӗн команда вунӑ чи лайӑх команда йышне кӗме пултарнӑ. Екатерина Федорова тӗпчев ӗҫӗсен конкурсӗнче ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑнӑ, уйрӑм ӑмӑртура виҫҫӗмӗш вырӑна тухнӑ конкурсантран 1 балл кӑна сахалрах пухнӑ. Мария Сытина уйрӑм ӑмӑртура тӑххӑрмӗш вырӑн йышӑннӑ.

Екатеринӑна Раҫҫейӑн пӗрлештернӗ командине кӗртнӗ. Июлӗн 22–30-мӗшӗсенче вӑл Карели Республикинче иртекен пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑк экологсен слетне хутшӑнӗ.

Ҫамрӑк экологсене Раҫҫей шайӗнче ӑмӑртма тивӗҫлӗ хатӗрленинче вӗсен вӗрентекенӗн – Юнкӑри вӑтам шкулта вӑй хуракан Татьяна Владимировна Ермаковӑн – тӳпи питӗ пысӑк. Юнкӑсене малашне те пысӑк ҫитӗнӳсем тума сунатпӑр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Лотерея

## Телейлисене кӗтетпӗр

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра Ҫӗнтерӳ тунӑранпа 67 ҫул ҫитнине халалласа патшалӑхӑн шутланман пӗтӗм Раҫҫейри «Победа» ыр кӑмӑллӑх лотерейине иртернӗччӗ. Унӑн тиражӗ 2012 ҫулхи июнӗн 14-мӗшӗнче пулчӗ. Выляса илнӗ телейлӗ билет хуҫисене район администрацийӗнче 122-мӗш кабинетра кӗтетпӗр. Ыйтса пӗлмелли телефон 62-3-38. Билетпа пӗрле паспорт та кирлӗ.

**1000 тенкӗ выляса илнӗ билетсен номерӗсем:**
137134, 137196, 137240, 137610, 137660, 137929, 160053, 160095, 160452, 160533, 160570, 190266, 190287, 190328, 190430, 190679, 190686, 190700, 190716, 190729, 190773, 190837, 202262, 202278, 202320, 202591, 202626, 202717, 202776, 202861, 202944.

**2000 тенкӗ выляса илнӗ билетсен номерӗсем:**
160003, 160161, 160332, 190674, 190724.

**3000 тенкӗ выляса илнӗ билетсен номерӗсем:**
137759, 190942, 202830.

**Районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗ.**

Демографи

## Феврония ҫуралнӑ

Пӗтӗм Раҫҫейри ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗнче пирӗн районти 222-мӗш пепке ҫуралнине регистрациленӗ. Вӑл – Хорнуйӗнчи Татьяна Анатольевнӑпа Алексей Николаевич Кузнецовсен пиллӗкмӗш ачи Анастасия.

Святой Петрпа Феврония кунӗнче вара Уйкас Апаш ялӗнчи Анастасия тата Алексей Павловсен ҫемйинче Феврония ҫуралнӑ.

Иртнӗ ҫур ҫулта вара 211 ача ҫуралнӑ пулнӑ: 113 арҫын ача тата 98 хӗр ача. Ашшӗ-амӑшӗсем ытларах Кирилл (11), Артемий (6), Дмитрий (6), Анна (7), Валерия (7), Карина (5) ятсене кӑмӑллани курӑнать.

Ку тапхӑрта районта пӗр йӗкӗреш ҫуралнӑ.

Ача ҫуралассии ӳсние пӗрлех ҫын вилесси те ӳснӗ: 166 арҫын тата 141 хӗрарӑм пурнӑҫран уйрӑлнӑ. Арҫынсен вӑтам ӳсӗмӗ 59 ҫулпа, хӗрарӑмсен – 78 ҫулпа танлашать.

Ҫур ҫулта 69 ҫӗнӗ ҫемье савӑрнине регистрацилесе пулсан, малтан пӗрлешнӗ 48 мӑшӑр уйрӑлнӑ.

**Пичете район администрацийӗн ЗАГС пайӗн материалӗ тӑрӑх хатӗрленӗ.**

Республикӑра

## Чӑваш Ен те пулӑшӗ

Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Краснодар крайӗн кӗпӗрнатторне Александр Ткачева ҫав тӑрӑхра ҫут ҫанталӑк синкерне пула инкексем пулнӑшӑн Чӑваш Ен те пӗрле хурланнине пӗлтерсе телеграмма янӑ.

Раҫҫей турисчӗсем кӑмӑллакан кану вырӑнне – Краснодар крайӗнчи Крымск хулине урмӑш ҫанталӑк йӑлтах тӗп тунӑ темелле, Геленджик тата Новороссийск хулисен пысӑк пайне шыв илнӗ.

Хальхи вӑхӑтра Чӑваш Енре ҫут ҫанталӑк синкерне пула шар курнисене ырӑ кӑмӑлтан пулӑшу кӳрес енӗпе ӗҫлекен штаб йӗркеленӗ. Михаил Игнатьев инкек тӳснисене тата вӗсен тӑванӗсене пулӑшма укҫа-тенкӗ, апатҫимӗҫ, япаласем пухассине йӗркелеме чӗнсе каланӑ.

Симӗс ӗҫ ҫи

## Ответлӑ тапхӑр

Ял хуҫалӑх ӗҫченӗсен паян ответлӑ тапхӑр – выльӑх апачӗ хатӗрлесе хӑварасси. Ҫак вӑхӑта утӑ планпа палӑртнин 80 процентчӗ чухлӗ (6 пин тонна ытла) янтӑланӑ. Ӑна планпа пӑхнинчен ытларах хатӗрленисен шутӗнче Е. Андреев яч. хис., «Свобода», Суворов яч. хис., Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуҫалӑхсем, «Колос» АПФ.

Нумай ҫул ӳсекен курӑксене ҫуласси «Передовик», «Ударник» хуҫалӑхсенче, Мичурин яч. хис. агрофирмӑра юлса пырать.

Сенажпа силос 12 хуҫалӑхра хатӗрлеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑта сенаж 2600 тонна ытла, силос 1000 тонна ытла хывса хӑварнӑ. Палӑртмалла: вӗсене хатӗрлесси иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтринчен самай юлса пырать.

Ҫӗртме сухи 4000 гектара яхӑн лаптӑк ҫинче туса иртернӗ.

Кӗскен

## Марафона хутшӑнӑр

Республикӑра пурӑнакансем «Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» ыр кӑмӑллӑх марафонне активлӑ хутшӑнаҫҫӗ. Июлӗн 5-мӗшӗ тӗлне марафон пухмачӗнче 5874175,07 тенкӗ пулнӑ.

Марафон вӗҫленмен. Унта кашниех хӑйӗн тӳпине хывма ӗлкӗрет. Сире ҫак адреспа кӗтеҫҫӗ: 428003, Шупашкар хули, Петров урамӗ, 7. Тел.: (8352)62-89-42.

**Реквизитсем:**

Расчетный счет № 40703810075220160067 в Отделении № 8613 Сбербанка России г. Чебоксары, БИК 049706609, к/с 30101810300000000609,

ИНН 2128005408, КПП 213001001. Получатель ЧРО ООБФ «Российский детский фонд».

Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑрсене, аттепе анненe – Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчи Ҫармӑҫкасси ялӗнче пурӑнакан **Петр Трофимович МЕДУНГИНА 60 ҫулхи, Манефа Евстафьевна МЕДУНГИНӐНА** 55 ҫулхи юбилейӗсем ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Турри сире вӑй-хал патӑр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр. Эпир сире юрататпӑр, сирӗнпе мухтанатпӑр, эсир пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: 2 ывӑлӗпе 2 кинӗ, 6 мӑнукӗ, хӑтитӑхлачисем тата йышлӑ тӑван-хурӑнташӗ.**

Хамӑрӑн юратнӑ аннене, мӑшӑра, асаннене – Турай ялӗнче пурӑнакан **Роза Порфирьевна НИКОЛАЕВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ те вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Ачусемпе, мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, пире пулӑшса тӑнӑшӑн тав тӑватпӑр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри сана тата нумай ҫул усратӑр.

**Саламппа: мӑшӑрӗ, хӗрӗсем, кӗрӳӗсем, 3 мӑнукӗ тата ытти тӑванӗсем.**



Анаткас Апаш ялӗнче пурӑнакан юратнӑ хӗрӗме, аннене, кӑмӑллӑ аппана, йӑмӑка, ӗҫчен хунямана, сывӑх тӑванӑмӑра – **Нина Геннадьевна СОКОЛОВӐНА** 55 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ӗҫрен те, ҫынна пулӑшсран та пӑрӑнманскере малашне те тулли пурнӑҫ, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Эсӗ хӑвӑн ӑшӑ кӑмӑлупа, ӗҫченлӗхӳпе пире хавхалантарса, пурнӑма вӑй-хӑват парса тӑратӑн. Эпир сана юрататпӑр, эс пурришӗн Турра тав тӑватпӑр. Кӗрекере ларнӑ чух эс юрланӑ юрӑсене итлес килет, санпа пӗрле юрлас килет.

**Саламлаканӗсем: амӑшӗ, пиччӗшӗпе инкӗшӗсем, аппӑшӗпе йыснӑшӗ, йӑмӑкӗсемпе кӗрӳӗсем, 2 ывӑлӗпе кинӗ, Вера хӗрӗ, тӑванӗсем.**

# «Алтай çĕрĕ çинче пултăмăр»

Халăх пултарулăхĕ



Кăçал июнĕн 25-мĕшĕнче Орининти Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕн 10 çынран тăракан коллективĕ Алтай çĕрĕ çине, виçĕ пин çул ытла каялла пирĕн аслă асатте-асаннесем пурăннă вырăна, Алтай халăхĕн регионсем хушшинчи «Эл-Ойын 2012» уявне çул тытрĕ. Шупашкара çитрĕмĕр. Алтая каякансем йышлă иккен. Республикипе 48 çын пуçтарăннă.

Малтанах Пушкăрт Республикинчи Аваркас районĕнчи Чăваш Хурамал ялне çитрĕмĕр. Пушкăрт чăвашĕсем пире çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç.

Музей ертӳçи Юрий Харитонович Леонтьев пире Василий Васильевич Николаев вил тăпри çинче пулса курма сĕнчĕ. Палăкĕ çинче çакăн пек çырса хуни пур:

«Крупный хозяйственный организатор, видный ученый, доктор технических наук, профессор, действительный член Российской Академии естественных наук и горных наук, почетный член Национальной Академии наук и искусств Чувашской Республики, заслуженный работник газовой промышленности РФ, дважды лауреат Государственной премии Чувашской Республики».

В.В. Николаев çак тăрăхри чăваш халăхне нумай енлĕн пулăшнă иккен. Вăл тăрăшнипе тата газпромăн Оренбургри филиалĕ пулăшнипе Аслă Василий святителĕн чиркĕвне туса лартнă. Кунти Культура çуртне тата шкул çуртне юсасшипе нумай тăрăшнă. Шупашкарта та Халăх наци музейĕ умĕнче унăн палăкĕ пур.

Шкул музейĕнче В.В. Николаевăн пултарулăхĕпе паллашнă хыççăн Культура çуртĕнче «Шуракăш» ансамбль тата Москакассинчи Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ «Калинка» ташă ушкăнĕ концерт кăтартрĕç. Пушкăрт чăвашĕсем питех те кăмăллăн, тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç пирĕн пултарулăха.

Концерт хыççăн Алтай Республикине çул тытрăмăр. Çул çинче автобус çĕмĕрĕлсе кайнине пула кăшт каярах юлса çитрĕмĕр уява. Алтай Республикинчи Онгудайски районĕнчи Ело сали çывăхĕнчи туллă-сăртлă илемлĕ айлăмра палаткăсем лартса Алтай халăхĕн виçĕ кун хушши иртекен «Эл-Ойын» уявне хутшăнтăмăр. Уява уçнă тĕле ĕлкĕртĕмĕр.

Уява уçасси театрализациленĕ представлени евĕр пушкăрт чĕлхипе иртрĕ. Пире вĕсен чĕлхине ăнланма йывăртарах пулчĕ. Уяв программи çумне çыпăçтарнă брошюра тăрăх кăштах ăнланкаларăмăр.

Уявра эпир 5 тĕрлĕ наци ăмăртăвĕн вăййисене куртăмăр: «Куреш» (Кĕрешӳ), «Шатра» (Алтайсен шашка вăййи), «Кодурге таш» (Чул йăтни), ут чуптарни, ухăран пени. Çавăн пекех Алтай халăх коллективĕсен, ачасен, килнĕ хăнасен пултарулăхне курса хакларăмăр. Кунпа пĕрлех ал ĕçĕсен выставкисемпе те паллашма кăмăллă пулчĕ.

Алтай тăрăхĕнче пурăнакансене пирĕн пултарулăх питĕ килĕшрĕ. Тепĕр кун ирхине уява килнĕ çынсенчен тав сăмахĕ сахал мар илтрĕмĕр. Ыйтусем те пачĕç. Питĕ тĕлĕнчĕç 3 пин те 600 километр инçĕше 3 кун хушшинче килсе çитнине пĕлсен. Эпир те тĕлĕнтĕмĕр тĕрлĕ сăртлă-туллă вырăнсене курса.

Алтай çĕрĕ çинче чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕ Ультиар Цыпленков ертсе пынипе ĕлĕкхи чăвашсене аса илсе, тав, хисеп туса асăну юпи лартрĕ.

Пирĕн «Шуракăш» коллектив Алтай Республикин культура министрĕн В.Е. Кончевăн Тав çырăвне тивĕçрĕ.

Çул çӳревре Челябинск облаçĕнчи туристсен «Аркаим» лагерĕнче пулса курма тӳр килчĕ. Кунта та тĕлĕнмелли çав тери нумай. «Аркаим – энерги çăл куçĕ», – теççĕ ку тăрăхра пурăнакансем. Иксĕлми сиплĕ çăл куç, вăй-хăватлă сăртсем пур ку тăрăхра.

Тутар Республикинче Чистопольски районĕнчи Билярскра çветуй çăл куç патĕнче пулса куртăмăр. Алькеевски районĕнче Сихтерме салинче Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн музейĕпе паллашрăмăр. Кунта пире музей директорĕ, Чăваш Енĕн хисеплĕ таврапĕлӳçи О.В. Мурзин кĕтсе илчĕ.

2012 çулхи çуллахи кунсем «Шуракăшсемшĕн» яланлăхах асра юлĕç. Алтай çĕрĕ çине кайса килме пулăшнăшăн спонсорсене, йĕркелӳçĕсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**И. СКВОРЦОВА,**
**«Шуракăш» ансамблĕн членĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Шуракăш» уявра.**

Редакци почтинчен

## Айтăр пурте утă хатĕрлеме!

Эпĕ хускатакан ыйту пĕр-пĕр çемьене е уйрăм çынна кăна пырса тивмест, вăл пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Мĕн пирки сăмах пуçарасшăн-ха вара эпĕ?

Коллективизм тени пире халĕ çав тери кирлĕ. Пĕр-пĕрне пулăшассин пĕлтерĕшĕ пысăк. Акă халĕ утă çулса хатĕрлессин хĕрӳ тапхăрĕ пырать. Ку вара вăл – пĕрле тумалли ĕç. Чи малтанах ачисен, çамрăксен ашшĕ-амăшне утă хатĕрлес ĕçре пулăшмалла. Хальхи вăхăтра вара вĕсем ку ĕçрен пăрăнма тăрăшаççĕ.

Эпĕ ялта пурăнатăп. Сăнанă тăрăх ытларах чухне пахчара пенсие тухнă ватă çынсем кăна аппаланаççĕ. Çакă яш-кĕрĕме чыс тумасть. Вĕсен хулара пурăнакан ывăл-хĕрĕсем яла килсен аш-пăшне те, пахча çимĕçне те илсе кайма тăрăшаççĕ. Анчах та утă хатĕрленĕ тапхăрта вĕсенчен ытларахăшне ялта курма çук.

Сăлтавĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Çапах та çак ответлă тапхăрта пĕр-пĕрне пулăшма вăхăт тупма пулатех пулĕ. Уйрăмах ватă çынсене пулăшу кирлĕ.

Чăвашсем ĕлĕк-авалах ĕçченлĕхпе, тăрăшулăхпа, пĕр-пĕрне пулăшнипе палăрса тăнă. Халĕ çак енсем чакса пыни сисĕнет. Хамăр халăхăн ырă енĕсене сыхласа хăварма тăрăшасчĕ.

**В. МАСТЕРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

Муркаш ялĕ.

Юбилей

## Хаçатпа тачă çыхăну тытать



Район хаçачĕн активлă ялкорĕсенчен пĕри, Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ Александр Шариков паян хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Редакци ĕçĕ-хĕлĕ вара уншăн ют мар. 1971 – 1979 çулсенче вăл районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн корреспонденчĕ пулса тимленĕ. Хăй вăхăтĕнче унăн «Восток», «За коммунизм» колхозсенче те, уй-хир бригадирĕнче те, «За коммунизм» колхозри пуçламăш комсомол организацийĕн секретарĕнче те, Мăн Сĕнтĕр райповĕн хатĕрлевçинче те тăрăшма тивнĕ. Хальхи вăхăтра вара, 2003 çултан тытăнса, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче тĕрĕслевпе пропуск пункчĕн контролерĕ пулса ĕçлет.

Çапах та Александр Матвеевича ытларахăшĕ вырăнти радио урлă лайăхрах пĕлет. Районти радиовещани редакторĕнче вăл 1983 – 2001 çулсенче ĕçлерĕ.

«Муркаш калаçать. Ырă кун сире, хисеплĕ радио итлекенсем. Вырăнти передачăсене пуçлатпăр...». Çак сăмахсемпе пуçланатчĕç вăл тунти кунпа юн кун тата эрне кун радио итлекенсем патне çитерекен передачăсем. Вăл хăйĕн репортажĕсемпе тĕрленчĕкĕсенче, хыпарĕсенче уçкатнă темăсен анлăшĕ пысăк пулнă. Кусем вĕсем районти промышленноç аталанăвĕ те, ял хуçалăхĕ те, строительство та, культурăпа вĕрентӳ, сывлăх сиплевĕн отраслĕсем те.

Хальхи вăхăтра Александр Шариков «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче контролерта тăрăшать терĕмĕр. Коллективра хисепре вăл. Хăйне шанса панă ĕçе ответлăха туйса, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырать. Ытти ответлă ĕçсенче вăл хунă чухне те унăн çак енĕсем яланах малти ретре пулнă.

– Пушă вăхăтра хушма хуçалăхра, пахчара аппаланма кăмăллатăп, – каласа парать Александр Матвеевич. – Килти сад пахчинче çуллен тĕрлĕ йышши улма-çырла, пахча çимĕç ӳстеретĕп.

Ыт ахальтен каланă сăмахсем мар кусем. Тĕрлĕ сортсене вăл çырăнса та илет, хăй те хатĕрлет. Ĕçчен пахчаçă июнь уйăхĕнчех хăяр туса илме тытăнать. Унăн пахчинче арпуссемпе дыньăсем те чиперех ӳсеççĕ. Çитменнине тĕрлĕ сортлисем пур.

– Арпусăн хăш-пĕр сорчĕсем 5 – 6-шар килограмлисем, дыньăсем 4-шар килограмлисем те ӳсеççĕ, – каласа парать вăл.

Район хаçачĕпе туслă çыхăну тытнă май «Пахчаçă сĕнет» рубрикăпа унăн статйисем хаçат страницисенче тăтăшах кун çути кураççĕ. Пахча çимĕç акса-лартса ӳстерессипе хăйĕн опычĕпе, сĕнĕвĕсемпе паллаштарсах тăрать вăл вулакансене.

Александр Матвеевич хăйĕн мăшăрĕпе Раиса Алексеевнăпа пилĕк ача пăхса ӳстерсе пурнăç сулĕ çине кăларнă. Вĕсем те ашшĕ-амăшĕ пекех ĕçчен те йĕркеллĕ, тарават. Эпир хамăрăн активлă ялкора юбилей ячĕпе саламланă май малашлăхра ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телей сунатпăр, район хаçачĕпе тытакан çыхăну малашне те çирĕп пуласса шанса тăратпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Тавар хакĕ туянакана тивĕçтертĕр

Суту-илӳ

Çак кунсенче район администрацийĕнче социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин черетлĕ иккĕмĕш ларăвĕ иртрĕ. Унăн ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ, вăлах ертсе пычĕ. Кун йĕркинче тăватă ыйту пăхса тухма палăртнă.

Пĕрремĕш ыйтăва район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталану пайĕн тĕп специалист эксперчĕ В. Пушкова тишкерчĕ. РФ Правительствин 2010 çулхи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн куллен чи кирлĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ уйрăм апат-çимĕç йышне çирĕплетнĕ. Перечень çирĕм тăватă тĕрлĕ тавартан тăрать. Саккунпа килĕшӳллĕн вара суту-илӳ предприятийĕсен вĕсен хакĕсене тĕрĕс те шайлашуллă йĕркелемелле, сăлтавсăр ӳстермелле мар. Çак ĕç епле пынине комисси тăтăш тĕрĕслет, çӳлерех асăннă пай çак йышри хаксен мониторингне тăвать. Ăна йĕркеленĕ май социаллă пĕлтерĕшлĕ таварăн вăтам хакне палăртаççĕ. Çакна валли Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен, "Визит", "Родничок", "Елена" лавккасенче тăтăш тĕрĕслев ирттереççĕ. Районти вĕрентӳ учрежденийĕсем те апат-çимĕçе ытларах райпо лавккисенчен туянаççĕ. Вĕсен хакĕсем те кулленхи тимлĕхре.

– Çак тапхăрта социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕ ӳснине ăнланма йывăр, çакна валли сăлтав çук, – терĕ Валентина Юрьевна.

Хальхĕхе районти суту-илӳ точкисенче сутăнакан пулă (1 проц.), çăмарта (3,4 проц.), хура чей (7,5 проц.) çăкăр-булка продукчĕ (5,6 проц.), купăста (3,3 проц.) хакĕсем республикăри вăтам кăтартуран пысăкрах.

– Уйрăмах çăкăр тата çăмарта хакĕсем республикăринчен пысăк пулни йĕркеллĕ пулăм мар. Çитес вăхăтра çак шайлашусăрлăха усăмлатма сĕнетĕп, – терĕ Р. Тимофеев кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтăва пĕтĕмлетсе.

Иккĕмĕш ыйту вара пире ытларах та шухăшлаттарма тивĕç, мĕншĕн тесен вăл ытларах çул çитмен çамрăксемпе çыхăннă. Пурнăç хăвăрт улшăнса пынине кура çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн вĕрентӳ тата культура учрежденийĕсем алкоголь продукцийĕпе, табак изделийĕпе суту-илӳ тăвакан точкăсенчен çĕр метртан çывăх пулмалла мар. Паянхи кун тĕлне районти вун икĕ шкул çак йĕркепе шайлашмасть. Çакăн пек йывăрлăх хăш-пĕр информацие культура учрежденийĕсемпе те çыхăннă. Ку, паллах, кĕске самантра татса памалли ыйту мар, çав хушăрах ырă улшăну пуласса кĕтсе алă усса лармалли сăлтав та мар. Çак çĕнĕлĕхе уйрăмах çул çитмен çамрăксене сиенлĕ йăласенчен, преступленисен тăвассинчен сыхлас тĕлĕшпе вăя кĕртнĕ.

Ку тĕлĕшри саккуна пăхăнман фактсене тупса палăртас тĕлĕшпе шалти ĕçсен пайĕн тата прокуратура ĕçченĕсем суту-илӳ точкисенче ятарлă тĕрĕслев ирттереççĕ. Çулталăкăн пĕрремĕш çуррине çул çитмен çамрăксене табак изделийĕ сутнă çичĕ факт, алкоголь продукцийĕ сутнă пилĕк факт тупса палăртнă. Çакăн пирки Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов пĕлтерчĕ.

– Çул çитмен çамрăксем хушшинче ăнлантару ĕçне ытларах сарас тĕлĕшпе вĕрентӳ учрежденийĕсенче алкоголь продукцине, табак изделине сивлекен профилактика ĕçĕсем ирттерĕç. Шкулсенче çамрăксен канашĕсем тата ытти ĕçе йĕркелени ӳссе аталанакан ăрăва тĕрĕс çулпа пыма пулăшасса шанас килет, – терĕ З. Дипломатова.

Алкоголь продукципе информацие культура учрежденийĕсенче усă курассине хирĕç кĕрешесси те тĕп ыйтусенчен пĕри шутланать, халĕ ку тĕлĕшпе тĕрĕслев ĕçĕсем пыраççĕ. Ялти Культура çурчĕ чăннипех те культурăн сӳнми вучахĕ пултăрччĕ яланах.

Виççĕмĕш ыйту Москакассинчи пасар пирки пулчĕ. Унти ĕç-хĕл епле пынине "Кристалл Плюс" СПССОК ертӳçи Г. Михайлов паллаштарчĕ. Ĕçе туллин вăя кĕртме проектпа смета документĕсем хатĕр ĕнтĕ.

Çапах та ларăва хутшăнакансемшĕн пире тавар сĕнекенсен шухăш-кăмăлĕ те кăсăклă пулчĕ. Пурпĕрех тавар туянакан ытларах райпо лавккисене кăмăлланă палăрать. Çавна май комисси членĕсене Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен представителĕсем И. Кондукторова тата Е. Ягиткина хăйсен ĕç-хĕлне йĕркелениpе паллаштарчĕç, социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсене тăтăш контроллени, вĕсем çине май пур таран пĕчĕкрех наценкăсем туни пирки каларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Муркаш кĕрлерĕ, савăнчĕ

**Фоторепортаж**

***Каçхи сакăр сехет çывхарать. Муркаша пухăннă çынсем кунти физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнчи сцена патнерех туртăнаççĕ. Юнашарах – Муркаш райповĕн суту-илӳ киоскĕсен речĕ, унти тĕрлĕ теттесене ашшĕ-амăшне туянма ыйтакан ача-пăча, райпо поварĕсем пĕçернĕ тутлă кукăль çисе киленекен аслă ăрури хисеплĕ çынсем, шашлыка ытларах килĕштерекен çамрăксем...***

***Çапла пуçланчĕ Муркашра иртнĕ шăмат кунхи каç. Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен, Çемье, юратупа шанчăклăх тата Раççейри çамрăксен кунĕсене халалланă уявсене пĕр кун irттерчĕç.***




*«30 çул потребкооперацинче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн» кăкăр ум паллипе Венера Константиновна Королькована, «Стройхозтовары» лавкка сутуçине, наградăларĕç.*




*Вĕренсе тухнă çамрăксем хăйсен тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.*




*Сцена çине «Рэндом» ташă шоу-балечĕ тухсан унтан никам та куç вĕçертмерĕ.*

### ПĔРИСЕМ ШКУЛ ПĔТЕРНĔ, ТЕПРИСЕМ – КАЧЧА КАЯСШĂН

Уява килсе çитнĕ кашни выпускника регистрацилерĕç: вĕсен балĕ пуçланчĕ. «Фантазия» ташă ушкăнĕ хыççăн сцена çинче Чуманкассинчи, Муркашри вăтам шкулсенчен тата Муркаш лицейĕнчен вĕренсе тухнă çамрăксем хăйсен тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Пурте хăйсен регистраци номерĕсемпе. Уява килнĕ кашни çын каярах балри корольпе королевăна палăртма хăйне килĕшнĕ выпускникшăн унăн номерне кăтартса смс-сасăлава хутшăнма пултарчĕ.

Акă сцена умнелле илемлĕ машинăсем кăшкăртса пыраççĕ, çакна кура халăх дружинникĕсем çынсене каярах чакма ыйтрĕç. Муркашри вунă хĕр качча кайма пуçтарăннă иккен. Пĕтĕм Раççейри Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ умĕн районти демографи лару-тăрăвне лайăх енне улăштарас тесе, паллах, чĕрери вĕри туйăмсемсĕр мар, хăйсен чечек çыххисене ывăтрĕç. Апла Муркашра кăçал сахалтан та тата тепĕр вунă çемье хушăнмалла...

Сцена çинче – илемлĕ ташă-юрă, уява пуçтарăннисем вара хĕрсе кайсах кĕсье телефонĕсемпе смс-хыпарсем çыраççĕ. 21 сехет çурă: смс-сасăлав вĕçленнине пĕлтерсе районти ертӳçĕсене сцена çине хăпарма ыйтрĕç.

### «ÇАМРĂКЛĂХ – ЧИ ИЛЕМЛĔ ВĂХĂТ»

Хăйĕн саламлă сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пурне те виçĕ хутлă уявпа саламларĕ. Ростислав Николаевич районти райпо ĕçченĕсен ĕçĕ кашниншĕнех курăмлă пулнине, çамрăксен вара яланах авангардра пулмаллине палăртса каларĕ. Муркаш енĕн сакăр хастар çамрăкĕ район администрацийĕн Хисеп грамотине, çирĕммĕшĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕ. Орининти шкултан вĕренсе тухнă, халĕ Мускаври патшалăх университечĕн студенткине Елена Алексеевăна Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премии лауреачĕн дипломĕпе наградăларĕç.

«Çамрăклăх – чи илемлĕ вăхăт. Пурте сирĕн алăра. Аслă ăрăва хисеплĕр, пĕр-пĕрне пулăшса пырăр», – çакна палăртрĕ хăйĕн саламлă сăмахĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Григорьевич Ванеркин. Выпускниксен балĕн королĕпе королеви пулма тивĕçнĕ яшпа хĕрĕн ячĕсене шăпах вăл пĕлтерчĕ. Акă конверт уçăлать: «Бал королĕ... – Владимир Кузьмин, бал королеви... – Марина Николаева!» Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăксене куракансем тăвăллăн алă çупса саламларĕç.



### «РАЙПОСЕМ ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕСЕН БЮДЖЕТ ПУЯНРАХ ПУЛАТЬ»

Район пуçлăхĕ И. Николаев Муркаш райповĕ республикăра чи лайăххисенчен пĕри пулнине, район хыснинче вĕсен тӳпи пĕчĕк маррине каларĕ. Унăн сăмахне «Чăвашпотребсоюз» пуçлăхĕн çумĕ А. Данилов çирĕплетсе Муркашри кооператорсем сумлă наградăсене тивĕçнине пĕлтерчĕ: «30 çул потребкооперацинче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн» кăкăр ум паллипе Венера Константиновна Королькована, «Стройхозтовары» лавкка сутуçине, наградăларĕç, Антонина Владимировна Карповăна потребкооперации ветеранĕн хисеплĕ ятне панине пĕлтерчĕç, Раççей Федерацийĕн центросоюзĕн Хисеп грамотипе Любовь Ивановна Ершовăна наградăларĕç, Вера Вениаминовна Карпова «Раççейри кооперации юхăмĕн çамрăк лидерĕ» кăкăр ум паллине тивĕçрĕ. Людмила Витальевна Звонкова технолога район администрацийĕн Хисеп грамотипе чысларĕç.

Муркашри райпо канашĕн председателĕ Б. Андреев ку таранччен тунă сумлă утăмсене аса илчĕ. Йывăр вăхăтсем те сахал мар пулнă, вĕсене çĕнтерсе пырса паян райпо ăнăçлă аталанать. Çакна юлашки çулсенче уçалакан çĕнĕ лавккасем, çĕнĕ кафесем те çирĕплетеççĕ. Вăхăт ыйтнинчен юлмасть паян Муркаш райповĕ. Апла уявра туллин савăнма кăмăл та пысăк пулчĕ вĕсен.



*Оринини шкултан вĕренсе тухнă, халĕ Мускаври патшалăх университечĕн студенткине Елена Алексеевăна Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премийĕн лауреачĕн дипломĕпе наградăларĕç.*

### «АХ, ЧĔРЕ,ЧĔРЕМ...»

Муркаш райповĕ халăха уяв парнелес тесе чăваш эстрада юрăçисене чĕннĕ: Алина Варна, Татьяна, Людмила Казакова... Алексей Шадриковăн «Ах, чĕре, чĕрем» юррипе куракансен чĕрисем чăнах та вырăнтан хускалчĕç: юрăççемпе пĕрле юрласа ташласси çакăнтан пуçланчĕ. Муркашра лайăх пĕлекен Алинăпа Александр Куликовсем, Фаина Григорьева та илемлĕ юрăсемпе халăха савăнтарчĕç. Сцена çине «Рэндом» ташă шоу-балечĕ тухсан унтан никам та куç вĕçертмерĕ.

Каçхи вун пĕр сехет хыççăн Муркаш çинчи тӳпе тĕрлĕ тĕслĕ илемлĕ фейерверкпа ялкăшрĕ. Çакăн хыççăн ватти-вĕтти киле саланма пуçларĕ, çамрăксем ди-джейсен фестивалĕнче савăнчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Православи уявĕ

# Ыран – Питрав

Питрав – чиркĕвĕн чи пысăк уявĕсенчен пĕри. Çимĕк хыççăн пуçласа Питравччен православи тĕнне ĕненекенсем типĕ тытаççĕ. Типĕ мĕн чуль тăсăласси Мăн кун хăçан пулнинчен килет. Çапла вара чи вăрăма тăсăлакан Питрав типпи ултă эрне чухлĕ те пулма пултарать. Типĕ тытнине Христоса ĕненекенсем Петрпа Павел апостолсем Святой Сывлăшран пил илнĕ хыççăн типĕ тытнине тата кĕлĕ вуланине тĕслĕх вырăнне илсе пурнăçлаççĕ.

Матфей çырнă таса Евангелире типĕ тытасси пирки акă мĕнле каланă: «...Типĕ тытнă чухне эсĕ пуçна çу сĕр, питне çу; çынсен умĕнче типĕ тытакан пек ан курăн, курăнман Аçу анчах куртăр ăна; вара вăрттăн тунине куракан Аçу сана кĕретех тавăрса парĕ». Çакă Турра ĕненекен кашни çыннăн хăйĕнчен усалсене хăваламаллине пĕлтерет. Усала вара кĕл тунипе тата типĕ тытнипе хăвалама пулать.

Типĕ тытни уявăн пĕлтерĕшĕ те пысăк пулнине çирĕплетет. Хуларан хулана, çĕр-шывран çĕр-шыва куçса Петрпа Павел апостолсем Христос вĕрентĕвне сарса çӳренĕ. Çак ырă ĕçпе вĕсем ытти апостолсенчен ытларах палăрса тăнă. Иисус Христос Турă ахальтен мар ĕнтĕ: «...эсĕ Петр (Чул), çак чул çинче эпĕ Хамăн Чиркĕвĕме лартăп, ăна тамăк хапхи те çĕнтереймĕ», – тенĕ (Матфей çырнă таса Евангелирен). Кунта чул тенине тӳрĕ пĕлтерĕшпе ăнланма кирлĕ мар, апостол Турра çирĕп ĕненни тесе ăнланмалла.

Питрава пирĕн районта Турай тăрăхĕнче уйрăмах анлăн уявлаççĕ, мĕншĕн тесен шăпах çак кун Турай чиркĕвĕ хăйĕн чиркӳ уявне паллă тăвать.

# Вĕсем пĕрлешнĕренпе – 50 çул

Шăпа



Илĕртӳллĕ тăрăхра вырнаçнă Рыккакасси ялĕ. Пĕр енче аслă çул сарăлса выртать, тепĕр енче вара ача-пăчана анлă кӳлĕ йыхравлать. Ял варрине йĕри-тавра лартнă лаштра йывăç илем кӳрет. Çак илемлĕхе йĕркеленĕ çĕрте ку ялтах пурăнакан Михаил Алексеевичпа Капитолина Александровна Алексеевсен килĕшӳллĕ çемйин тӳпи пысăк. Çулсем кайнăçемĕн вара вĕсен аса илмелли те сахал мар. Шăкăл-шăкăл калаçма чылай чухне ялти хисеплĕ çынсем шăпах çакăнталла çул тытаççĕ те.

Çак кунсенче Алексеевсен анлă кĕреки тăван-хурăнташа, ял-йыша пĕрле пухрĕ, ăна валли вара сăлтавĕ те пысăк пулчĕ. Вĕсем çемье çавăрса пĕрлешнĕренпе 50 çул çитрĕ. Паллах, çак сумлă тапхăра пурăнса çитме пĕр-пĕрне ăнланса, чунтан юратса та килĕштерсе пурăнни пулăшнă ĕнтĕ вĕсене.

Вĕсен кун-çулне сăнланă май нушаллă ачалăха, çамрăклăха палăртса хăвармасăр иртме çук пулĕ.

– Вăл вăхăтри чылай çыннăнни пекех, пирĕн шăпасем те савăк пулмарĕç. Аса илсен халĕ те куçăм шывланать, çав тапхăра паянхи çамрăксем ĕненесшĕн те мар, – тесе пуçларĕ калаçăвне Михаил Алексеевич.

...1940 çул. Тулта шартлама сивĕллĕ декабрь уйăхĕ. Пӳртре вара йывăр чире кайнă хĕрарăм тăтăш пĕчĕк ачасем пирки кулянать. Ăна, паллах, ытларах сывăх çын хӳтлĕхĕсĕр юлакан шăпăрлансен кун-çулĕ пăшăрхантарать. Çапла вара Мишăн амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Пилĕк ача тăлăха юлать. Кун-çул çапла килсе тухнишĕн никама та хурлаймăн. Хĕрĕх кун иртсен ачасене пăхма Çеçмертен çирĕм тăххăрти хĕре килсе килеççĕ.

Сасартăк яла хăрушă вăрçă пуçланнă текен хыпар кисретет. Çемье пуçне фронта ăсатаççĕ. Вун тăватă çулхи Миша ашшĕ вырăнне юлать, пĕтĕм йывăр ĕç ун çине тиенет. Тăван мар амăшĕ йышлă çемьене пĕчĕк пепке илсе килет. Вун ултта пуссан яша çар комиссариачĕ Магнитогорск хулинчи пăхăр пралук тăвакан завода ĕçлеме, ФЗОна вĕренме ярать. Тăван килте вара хĕрарăм пилĕк ачапа юлать. 1943 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче вăрçă хирĕнчен хăрушă хыпар çитет. Çемье пуçĕ Смоленск хули патĕнче вилмеллех аманать.

Килти пурнăç йывăрлансах пынăран военкомат урлă Мишăна каялла таврăнма ыйтаççĕ. Çапла вара вăл Шупашкарти элеватора ĕçлеме вырнаçать. Тинех сĕтел çинче тин кăна пĕçернĕ ăшă çăкăр курăнма пуçлать, унччен вара крахмал çиме те тӳр килнĕ. Каярах, вăрçă чарăнсан, амăшĕ каллех ăна тăван киле килме ыйтать, унта кил-çурт япăхса çитнĕ иккен.

Çапла вара Михаил Алексеевич тăван хуçалăхра бригадирта тăрăшма пуçлать, каярах ял Совечĕн ертӳçинче вăй хурать. Пултарулăхне кура ăна тĕрлĕ ответлă должноçсем шанса параççĕ. Кирек хăш ĕçре те вăл активлисенчен пĕри, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Хăй çирĕп йĕркене пăхăнса ĕçленĕ, ыттисенчен те çавнах ыйтнă. Пултаруллă çыннăн ĕçне чылай тĕрлĕ Хисеп грамотипе паллăсем çирĕплетеççĕ.

Çавăн пекех унăн мăшăрĕнчен, Капитолина Александровнăран та йывăр пурнăç аякран иртмен. Ачаллах тăлăха юлнăскерĕн ыттисемшĕн самай тăрăшма, арçын ĕçне те пурнăçлама тивнĕ. Тăван хуçалăхра та, хăма хатĕрлекен заводра та ырми-канми тăрăшнă. Ĕçченлĕхĕпе тăрăшулăхне кура унăн сăн ӳкерчĕкне Хисеп хăми çине вырнаçтарнă, çавăн пекех вăл чылай Тав çырăвĕпе ырă ята тивĕçнĕ.

Вĕсем иккĕшĕ те çемьесенчи кĕçĕн ачасене ура çине тăратсан кăна хăйсем пирки шухăшланă, килĕшӳллĕ те çирĕп çемье çавăрнă. Хăйсем те яланах тӳрĕ кăмăллă пулнăран виçĕ хĕрне те çавнах вĕрентнĕ, мĕн пĕчĕкрен ĕçпе писĕхтернĕ, ватта-вĕтте хисеплеме сĕннĕ.

Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тенĕ евĕр вĕсен ачисенче ырă енсем кăна пур. Аслă хĕрĕ Софья, врач пулса ĕçлекенскер, ашшĕ-амăш сывлăхĕпе тăтăш кăсăкланать. Тепĕр тесен, ăшă сăмах эмелрен те паха теççĕ вĕт. Алексеевсен ачисем вара кун-çул парнелекенсене кун йышши сиплевпе ялан тивĕçтереççĕ.

Алексеевсен килĕшӳллĕ çемйи чăннипех те питĕ маттур. Çавăнпах та пулĕ вĕсем пуриншĕн те ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Алла-аллăн тытăнса утакан, çур сăмахран пĕр-пĕрне ăнланакан мăшăр ялта пысăк хисепре. Çавăнпах та пулĕ вĕсем "Юратупа шанчăклăхшăн"" медале тивĕç тесе шутлаççĕ çак тăрăхра пурăнакансем.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

Прогноз погоды

| | среда 11 июля | | | | четверг 12 июля | | | | пятница 13 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +19 | +27 | +32 | +22 | +17 | +27 | +32 | +24 | +21 | +23 | +30 | +23 |
| Давление мм | 745 | 746 | 745 | 744 | 744 | 744 | 743 | 742 | 740 | 739 | 737 | 736 |
| Влажность % | 56 | 42 | 22 | 58 | 73 | 47 | 27 | 65 | 57 | 59 | 39 | 71 |
| Ветер м/сек | 4 | 4 | 4 | 2 | 2 | 3 | 2 | 2 | 3 | 5 | 5 | 2 |
| | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю-В | Ю-В | В | В | В | Ю-В | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 04:23 | 21:33 | | | 04:25 | 21:32 | | | 04:26 | 21:31 | |
| Луна восход / заход | | 23:49 | 14:09 | | | - | 15:18 | | | 00:11 | 16:24 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

Тав тăватпăр

Çу уйăхĕнче пирĕн шăллăм Денис инкеке лекрĕ, йывăр сусăрăнчĕ. Çав вăхăтра йывăрлăхсем умĕнче хуçălса ӳкме паманшăн, сăмахпа та, укçа-тенкĕпе те питĕ хытă пулăшу панăшăн Мăн Шаптак, Платкасси, Тойкилтĕ ял çыннисене, Тойкилтĕ шкул коллективне, тус-юлташсене, çывăх тăвансене, Муркаш больницин реанимаци уйрăмĕн ĕçченĕсене чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсем каласа тав тăватпăр. Сирĕн ĕçĕрсем ялан ăнса пыччăр, сывлăхăрсем çирĕп пулччăр, çемйĕрсенче килĕшӳпе ăнланулăх, юрату хуçаланччăр.

**Сергеевсен çемйи.**

Пĕлтерӳсем. Объявления


**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-20.**

* * *

**Пилĕк уйăхри хура тĕслĕ тынашка сутатăп.**
**Тел.: 8-905-345-66-72, 8-908-307-09-44.**

* * *

**Продаю Renault Sumbol 2005 года выпуска, черный, двигатель 1.4 л, ГУР, иммобилайзер, сигнализация. Тел.: 8-953-016-98-05. 2-2.**

**Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"**
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

* * *

**Продаю дом с земельным участком.**
**Тел.: 8-903-322-82-12. 2-2.**

* * *

**Ĕне сутатпăр, виçĕ пăру тунăскер.**
**Тел.: 8-927-85-33-007.**

* * *

**Продаю песок речной, ОПГС с доставкой.**
**Тел.: 44-01-10. 6-10.**

* * *

**Январь уйăхĕнче пăруламалли тăпалкка, ăратлă тынашки сутатпăр. Амăшĕ питĕ сĕтлĕ. Тел.: 8-906-133-01-80. 2-2.**

* * *

**Продается косилка роторная Л-501-01, колеса автомобильные R-13 комплект. Цена договорная.**
**Тел.: 8-927-998-21-03.**


* * *

**Поправка. В газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» № 101 (7955) от 14.12.2011 г. в извещении о согласовании проекта межевания земельных участков в первом абзаце после слов «Ярославское сельское поселение» добавить «в поле № 4, севооборот 2, участок 1; поле № 4, севооборот 2, участок 2; поле № 2, севооборот 2; поле № 2, севооборот 1, участок № 1» и далее по тексту.**

* * *

**РЕШЕНИЕ ПУБЛИЧНОГО СЛУШАНИЯ**
**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний **постановляю:**

Изменить разрешенное использование земельного участка из категории «земли населенных пунктов»:

- с кадастровым номером 21:17:020201:91 площадью 694 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, с. Ильинка, участок 11 с «для ведения огородничества» на «для ведения личного подсобного хозяйства».

Итоги проведения публичного слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

06 июля 2012 года прошли публичные слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

На указанное выше публичные слушания было принято следующее решение:

Одобрить проект решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

* * *


**ООО «Универмаг» собирает лекарственные травы в сушеном виде (за 1 кг в руб.):**

- березовый лист – 30
- зверобой (трава) – 35
- корень лопуха – 35
- корень одуванчика – 50
- липа (цветы) – 180
- мать-и мачеха (листья) – 50
- подорожник (листья) – 50
- мята (листья) – 25
- пастушья сумка (трава) – 25
- пижма обыкновенная – 25
- смородина (листья) – 35
- горец птичий спорыш (трава) – 24
- сушеница (трава) – 50
- тысячелистник (соцветие) – 25
- хвощ полевой – 28
- череда (трава) – 35
- черемуха – 60
- крапива (листья) – 30
- душица – 30
- чистотел (трава) – 30

**А также принимаем скот, молоко. Своевременную оплату гарантируем.**


* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Федоров Валентин Федорович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Карманкасы, ул. Озерная, д. 6.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, общей площадью 1,27 га.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 10.07.2012 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4493.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.